«Радиохум – хаçат страницинче: Ача шăпи – ашшĕ-амăш алллинче»

Чунра чун хĕлхемĕ кирлех

2008 çул пуçланчĕ. Çемье тата Ырă ĕçсен çулталăкĕ. Çулне çавăн пек ят панăран мар, хамăршăнах лайăх-çке пĕр-пĕринпе ыр кăмăллă пулсан, çемьере килĕшӳпе тату пурнăç хуçалансан. Шел пулин те, пурте ăнланса пĕтересшĕн мар пулмалла çакна. Е ăнланасшăн та тăрăшмастпăр? Çынна ыр тума мар, харпăр хăй ачи килте хăйсене телейлĕ туйччăр тесе тăрăшманнисем те çителĕклĕ вĕт районта. Районти вĕрентӳ пайĕн ачалăха сыхлассипе ĕçлекен тĕп специалисчĕ И.С. Кабуркина районти çул çитмен çамрăксемпе вĕсен прависене хӳтĕлессипе ĕçлекен комиссин иртнĕ çулхи юлашки ларăвĕнче палăртнă тăрăх, 2007 çулта ашшĕ-амăшĕн хӳттисĕр юлнă 17 ачана тупса палăртнă, вĕсенчен 11-шĕ ашшĕ-амăшĕ сывă çĕртех вĕсен ăшшине туяймаççĕ. Район администрацийĕн, шалти ĕçсен пайĕн, прокуратура, социаллă хӳтлĕх пайĕн ĕçченĕсем ирттерекен рейдсем ăнăçсăр çемьесенчи ачасемшĕн çăлăнăç вырăнĕнчех. Ираида Семеновна каланă тăрăх, пĕлтĕр ирттернĕ 89 рейдра 371 çемьере пулнă. 40 ачана реабилитаци палатине илсе килнĕ.

Çӳлерех асăннă ларăва чĕннĕ 30 çула та çитмен хĕрарăм халĕ те асран тухмасть.

– Больницăра сипленекен пĕчĕк хĕр ачине унта пĕччен пăрахса хăварнăшăн чĕнтернĕ ăна ларăва.

– Малтанхи икĕ ачи тĕлĕшпе ăна амăшĕн прависенчен хăтарнă. Вĕсемшĕн алимент укçине тӳлеменшĕн условно майпа судпа айăплана, – ăнлантарать И.С. Кабуркина О.Г. Блинова пирки.

– Урăх ун пекки пулмасть, – чунтан каланă пекех туйăнать ача амăшĕ.

Анчах кăлăхах иккен. Çав лару хыççăн больницăран тухсан ача татах больницăна лекмелле чирленĕ.

– Паян ачи больницăра, амăшĕ ун патне пырса та курăнмасть, – хаш! сывлать И.С. Кабуркина.

Кунта мана ачисене çитĕнтернĕ хĕрарăм сăмахĕсем аса килеççĕ:

– Мĕн тери телейлĕ вĕсем ачи пĕчĕк амăшĕсем. Ачисем те çумрах, проблемисем те вĕсен пĕчĕк-ха, – терĕ вăл.

Чăннипех те, пурнăç курнă çын сăмахĕсем кусем. Пур телее упрама пĕлместпĕр пулас. Ана хаклама пĕлместпĕр вăл çумра чух.

Тарăннăн шухăшлама пĕлни çулсем иртнĕçемĕн палăрма пуçлать-ши çынра? Çамрăклăхра-ши тата айăпĕ? Çук пулĕ, йăлтах хамăртан килет: ырă кăмăлĕ те хамăртах, усал шухăшĕ те. Вĕсенчен хăшĕ çиеле тухасси те хамăртанах килет. Вăхăта, пурнăçа хаклама пĕлни çулсем иртнĕçемĕн çыпăççан та çын çумне, ачана çуратсан амăш туйăмĕ кĕмелле пек-çке-ха. Пурин те мар-ши вара? Амăш туйăмлĕ çын ача çуратнăшăн паракан пособисемпе çакăнпа çыхăннă ытти тӳлевсене ирĕк пурнăçра çӳресе çилпе вĕçтерет-ши?

Кун пекех пулсан, амăш прависенчен хăтарма материалсем хатĕрлеме пуçламалла, – тенĕччĕ комисси членĕсем.

– Эп хамах ӳстеретĕп хам ачана, туртса ан илĕрех.

Тин çеç 18 çул тултарнă ача амăшĕн сăмахĕсем кусем те.

Иртнĕ çул ачисене ирĕк пурнăçпа, эрех черккипе улăштарнă 7 ашшĕ-амăшне çак правасенчен хăтарчĕç. 9 ача çĕр çинчи çывăх çынсем чĕрĕ-сывă çĕртех вĕсен ăшшисĕр ӳсеççĕ. Çук, пĕлтĕр пĕр ачана та ача çуртне вырнаçтарман. Ыр чĕреллĕ çынсем вĕсене хăйсен хӳттине илчĕç. Акă камсенчен тĕслĕх илмелле хăйсем ашшĕ-амăш иккенне манакансен. Районта 78 ача паян опекунсемпе пурăнать, чăн-чăн çемье ăшшине туйса ӳсет.

2007 çулта ачана пурăнма илнĕ çемьесен йышĕ ӳсни те пирĕнте çынлăх, ыр кăмăллăх хушăнса пыни пирки калать. Виçĕмçул пĕр ачана пĕр çемьене пурăнма илнĕ пулсан, иртнĕ çул çакăн пек çемьесен йышĕ 6 çитрĕ. 7 ача çитĕнет вĕсенче. Тепĕр икĕ ачана усрама илчĕç икĕ çемьере.

Тĕрлĕрен чĕреллĕ пулаççĕ иккен çынсем. Пĕрисем хăйсем чун панă тĕпренчĕкĕ валли те пĕр пĕрчĕ юрату тупаймаççĕ, теприсен вара чун ăшши хăйсен ачисем валли те, телей мĕнне пĕлмен ют ачасемшĕн те çителĕклех.

Йăлтах хамăртан килет иккен. Йăнăша вăхăтра ăнланаси те. Ираида Семеновна тĕслĕхсем илсе кăтартрĕ. Ачасемшĕн, вĕсен пуласлăхĕшĕн черкке патне тăснă алла каялла туртса илме те пулать вĕт. Çакна тума вăй çитерекен хĕрарăмсем пулчĕç районта, эрех ĕçессинчен сипленсе килчĕç.

Эрехпе пуçа минретсе ачасен куçĕ умĕнче пĕр-пĕринпе харкашни ырă патне илсе çитерет-ши тата? Кун пек тĕслĕхсем те çителĕклех-ха. Кашни ял тăрăхĕнчех. Курнине курмăш пулмалла мар çеç, çын инкекĕшĕн савăнмалла мар тата. Çыншăн чун хĕлхемне хĕрхенмелле мар. Çав хĕлхем тепринче ырă туйăм чĕрттĕр. Апла пулсан çынсем улшăнасса кĕтер мар, хамăртан пуçлар. Ырă ĕçсем ытларах тума тăрăшар. Кӳршĕре выçă ларакан ачашăн çăкăр татăкĕ хĕрхенер мар, унăн черкке енне сулăннă ашшĕне-амăшне эрех сутар мар. Вара районта ăнăçсăр çемьесен йышĕ те чакĕ, ачасен куçĕсем те телейпе çиçĕç. Хамăр чунра та лайăх пулĕ çынна ыр тунăран.

Сăмахăма вара тивĕçлĕ канăва тухнă ятлă-сумлă çын сăмахĕпе вĕçлес килет:

– Çамрăк чух тӳрккесрех калаçни те пулнă пуль. Халĕ çынсемпе те калаçма вĕренсе çитрĕм, пурăнма та – анчах çамрăклăх хыçа юлчĕ.

Эппин, чун ăшшине хĕрхенес марччĕ. Паян тăвасчĕ çак ĕçе. Паян.

Л. ПАВЛОВА.

Халăх йăли-йĕркисем

Кăшальня

Кăшальня (Кăшарни) йăли-йĕркине чăвашсем тĕне кĕнĕ хыççăн тин тума пуçланă. Кăрлачăн 18-мĕшĕнче тĕттĕм пуличчен хапхасем, алăксем çине хĕрессем хурса тухаççĕ. Çапла усал-тĕсел çулне хупланă. Çветке пулса чупнă çамрăксем вакă касса шыва кĕрсе тасалаççĕ. Тепĕр кунне кăшальня куклисем пĕçереççĕ.

Православи Крещени уявне Иисус Христос шыва кĕнĕ кун тесе палăртать. Ăна тепĕр тĕрлĕ Богоявлени теççĕ. Шăпах çак кун Сăваплă Троица курăннă: Иисус Христос, Çветтуй сывлăш тата Турă ашшĕ. Çакна нумай халăх курнă.

Крещени каçĕнче светить тунă шыва агиасма теççĕ. Чиркӳ йăлипе кĕлĕ вуласа шыва хĕреçе виçĕ хут чиксе кăлараççĕ.

Çветтуй шыв сиплет тесе шутлаççĕ. Вăл пăсăлмасăр нумай вăхăт хушши упранать. Ăна турăш çывăхĕнче тытмалла.

Çак шыва сипленме ялан виçĕ сыпкăм туса ĕçмелле. Кĕлĕ вуламалла. Кил-çурта, япаласене çветтуй шывпа сапса тасатаççĕ. Çветтуй шыв усал вăйсене хăваласа ярать.

Кăрлачăн 18-мĕшĕнче типĕ тытаççĕ. Кăшальня шывĕ çулталăкĕпе пуçтарăннă çылăхсене çуса тасатать тесе шутлаççĕ.

Редакци почтинчен

Тав сăмахĕ

Муркашри тĕп больницăн, Ярапайкассинчи пĕтĕмĕшле практика врачĕн офисĕн врачĕсене, медицина сестрисене, санитаркисене, шурă халатлисене халалласа.

Çын сывлăхĕшĕн хыпса çунатăр
Ăсăр-халăра пĕр шеллеми,
Çын хуйхине пĕрле пайлатăр,
Çавăнпа эсир чи илемли.

Манмăп эпĕ сире нихăçан та,
Вăрăм ĕмĕр сунатăп сире.
Хам пуçăма тайса мухтатăп,
Тав сăмахĕ калап чĕререн.

К.Н. ПОТЯНОВА.
Итакачкасси ялĕ.

Спорт

23 команда хушшинче – 3-мĕш

Декабрь уйăхĕнче республикăра «Зарница» тата «Орленок» вăйăсен 1-мĕш тапхăр ăмăртăвĕсем иртнĕ. «Орленок» командисем хушшинче унта Муркаш шкулĕн команди те хутшăннă. Ертӳçи – В.Г. Львов. Ачасем пĕчĕк калибрлă винтовкăран тĕл пересспе тата радиостанция ĕçе хатĕрлесе çитерсе унпа усă курассипе ăмăртнă, 1-мĕш тата 9-мĕш вырăнсене тивĕçнĕ. Пĕтĕмĕшле итогсемпе команда 3-мĕш вырăн йышăннă.

Çĕнтерӳçĕ – «Родина» клуб

Вăрнарта çарпа патриотика клубĕсен ăмăртăвĕсем иртнĕ. Унта Муркаш шкулĕнчи В.Г. Львов ертсе пыракан «Родина» çарпа патриотика клубĕ те хутшăнма тивĕçнĕ. Муркашсем парашют спорчĕ енĕпе 1-мĕш, алă вăйĕпе кĕрешессипе 4-мĕш вырăнсене çĕнсе илнĕ. Команда пĕтĕмĕшле 1-мĕш вырăна алăран вĕçертмен.

Тĕл перекенсен кружокĕсем ăмăртнă

Январĕн 9-мĕшĕнче районти 11 шкулти тĕл перекенсен кружокĕсене çӳрекенсен командисем хушшинче ăмăртусем иртнĕ. Унта хутшăнакансем пĕчĕк калибрлă тата пневматикăллă винтовкăсенчен тĕл пересспе кăна мар, Калашников автоматне сӳтессипе те, пуçтарссипе те, магазина патронсем хăвăрт тултарассипе те, тĕл пересспе теорийĕ енĕпе те вăй виçнĕ. Уйрăм спортсменсем хушшинче Дмитрий Плечов (Муркаш шкулĕ), Андрей Андреев (Муркаш), Сергей Павлов (Оринин), командăсем хушшинче Муркаш (ертӳçи В.Г. Львов), Йӳçкасси (ертӳçи П.Н. Васильев) тата Мăн Сĕнтĕр (ертӳçи И.В. Семенов) шкулĕсем мала тухма пултарнă.

с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4. Вход со стороны Универмага. Тел.: 2-13-80.

Участник долевой собственности Воробьев Анатолий Максимович, 01.02.1930 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, деревня Верхние Олгаши, ул.Центральная, д. 3, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности земельного участка из земель сельскохозяйственного назначения на территории землепользования СХПК “Сундырский” в поле № 2, полевой севооборот № 4 площадью 1,31 га (пашни).

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 3 адреса:
1. Администрации Большесундырского сельского поселения.
2. Воробьеву Анатолию Максимовичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, деревня Верхние Олгаши, ул.Центральная, д. 3.
3. Межрайонное отделение № 4 Управления Роснедвижимости ЧР, расположенный по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, село Моргауши, улица Мира, дом 6.

Пĕлтерӳсем. Объявления

Продаю однокомнатную квартиру в с. Моргауши по ул. Чапаева, д. 59, по цене 1050 тыс. руб. Первый этаж, подвал, индивидуальное отопление. Можно по ипотеке. Тел.: 8-905-345-84-00. 2-2.

Продается кирпич: красный одинарный, красный полуторный пустотный М-125, одинарный половинки, силикатный, керамзит, гравмасса, керамзитобетонные блоки. Доставка. Тел.: 8-903-358-20-97, 44-20-97. 5-6.

Перевозки по России. Газель. 13 мест. Тел.: 8-960-300-39-12. 2-2.

Закупаю от сельхозпредприятий свиней живым весом по высоким ценам, мясом с населения. Тел.: 8-927-854-96-32, 2-13-77. 3-5.

Продается двухкомнатная квартира. Тел.: 8-906-389-92-96.

Продаю пиломатериал: доски обрезные, необрезные, разный брус, подтоварник. Срубы на заказ. Доставка. Тел.: 8-903-389-14-00. 1-11.

Реализуем цемент, бетон, раствор.
Принимаем на работу швей в швейный цех.
Предлагаем готовые одно-, двухкомнатные квартиры в д. Москакасы Моргаушского района ЧР.
Обращаться в ЗАО «МСО «Моргаушская» по тел.: 32-2-23, 2-21-29, 2-21-19. Адрес: ЧР, Моргаушский р-н, д. Юнгапоси, ул. Ягодная, 21. 2-2.

Продаю месячных бычков по договорной цене. Порода «Кострома». Доставка. Тел.: 8-927-863-28-05.

Пĕр уйăхри вăкăрсем сутатăп. Хакĕ калаçса татăлнă тăрăх. Тел.: 8-927-666-58-29.

Предоставляется гараж 3 бокса, теплый, с подъемным механизмом и ямой для поправки кузова, в аренду. Цена договорная.
Продается автомашина ГАЗ-52 - фургон, ГАЗ-52 - бортовая – исправные, двигатель ВАЗ-2101 - имеется паспорт. Блоки керамзитобетонные, кольца железобетонные для колодцев (оказываем услуги по бурению колодцев), трубы асбестоцементные любых размеров, печи банные и печки-прачки.
Обращаться: д. Ландыши, ООО «Энергосервис». Тел.: 8(835-41)60-2-39.

Участник долевой собственности Трофимов Михаил Тарасович, 01.06.1932 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, деревня Кюрегаси, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности земельного участка из земель сельскохозяйственного назначения на территории землепользования ЗАО “Колос” в поле № 4, полевой севооборот № 1, участок № 2 общей площадью 1,42 га (пашни).

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 3 адреса:
1. Администрации Кадикасинского сельского поселения.
2. Никифорову Андрею Владиславовичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, город Чебоксары, улица Университетская, дом 33, квартира 177.
3. Межрайонное отделение № 4 Управления Роснедвижимости ЧР, расположенный по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, село Моргауши, улица Мира, дом 6.

Участница долевой собственности Потянова Клавдия Никифоровна, 25.01.1946 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, деревня Йдагачкасы, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности земельного участка из земель сельскохозяйственного назначения на территории землепользования СХПК “Дружба” в поле № 3, полевой севооборот № 2 общей площадью 1,28 га.

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 3 адреса:
1. Администрации Ярабайкасинского сельского поселения.
2. Потяновой Клавдии Никифоровне, проживающей по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, деревня Йдагачкасы, ул. Советская, д. 9.
3. Межрайонное отделение № 4 Управления Роснедвижимости ЧР, расположенный по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, село Моргауши, улица Мира, дом 6.

Участница долевой собственности Ивакова Вера Семеновна, 10.10.1928 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, деревня Шомиково, ул. Шомиково, д. 35, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности земельного участка из земель сельскохозяйственного назначения на территории землепользования ЗАО “Колос” в поле № 3, полевой севооборот № 1, 1 бригады площадью 0,71 га (пашни).

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 3 адреса:
1. Администрации Кадикасинского сельского поселения.
2. Иваковой Вере Семеновне, проживающей по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, деревня Шомиково, ул. Шомиково, д. 35.
3. Межрайонное отделение № 4 Управления Роснедвижимости ЧР, расположенный по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, село Моргауши, улица Мира, дом 6.

Участница долевой собственности Ивакова Галина Георгевна, 10.07.1950 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, деревня Шомиково, ул. Шомиково, д. 35, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности земельного участка из земель сельскохозяйственного назначения на территории землепользования ЗАО “Колос” в поле № 3, полевой севооборот № 1, 1 бригады площадью 0,71 га (пашни).

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 3 адреса:
1. Администрации Кадикасинского сельского поселения.
2. Иваковой Галине Георгевне, проживающей по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, деревня Шомиково, ул. Шомиково, д. 35.
3. Межрайонное отделение № 4 Управления Роснедвижимости ЧР, расположенный по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, село Моргауши, улица Мира, дом 6.

Муркаш ял тăрăхĕн коллективĕ кунта нумай çул хушши ĕçленĕ Нина Дмитриевна Ковалеван мăшăрĕ
Степан Владимирович КОВАЛЕВ
вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

«Вита» ООО коллективĕ кунта учредитель пулса тăракан Ольга Михайловна Еремееван
АМĂШĔ
вхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн çемйипе пĕрле тарăннăн хурланнине пĕлтерет.

Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики “Моргаушский издательский дом”.

Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни - 2-12-82, экономики - 2-11-38.
Факс: 2-11-36; E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Объем 1 усл. печатный лист.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Белов А.П.
Номер подписан 18.01.2008 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3605.

Номер набран и сверстан в ГУП “Моргаушский издательский дом”, отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.